28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 МАЙ 22 ЫТЛАРИКУН 97(6848) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăтам шкулта экзаменсем пуçланчĕç

Паян совет шкулĕнче вĕренсе тухмалли экзаменсемпе аслăрах классене куçмалли тĕрĕслевсем пуçланаççĕ. Кăçалхи экзаменсем Совет çĕршывĕнчи пĕтĕм халăх çав тери хавхаланса пурăннă тапхăрта пулса иртеççĕ. Мĕнпур совет халăхĕпе пĕрлех, миллионшар вĕренекенсемпе педагогсем пирĕн çĕршывăн аслă çĕнтерĕвĕшĕн, гитлерла Германие çĕнтернĕшĕн савăнса, татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме хавхаланаççĕ. Çĕнтерӳ ялавне Берлин çине çĕклесе лартнă, тăшмана пĕр сăмахсăр парăнтарнă совет улăпĕсем—çак геройсем çинчен шухăшлаççĕ ĕнтĕ пирĕн çамрăксем. Çĕнтерӳ хĕвелĕпе çуталса тăракан пурнăç пирĕн çамрăксене мĕн тери лайăххăн та килĕшӳллĕн туйăнать.

«Ман умра сарлака, такăр та тӳрĕ çул выртать,—тесе çырнă хăйĕн сочиненийĕнче Красноярскри 11-мĕш шкултан вĕренсе тухакан Бережнова юлташ.—Эпĕ кирек ăçта ĕçлесен те, кирек мĕн тусан та, манăн пĕтĕм шухăш хамăрăн Тăван çĕршывăмăршăн тӳрĕ кăмăлпа тăрăшасси пулать. Манăн хамăрăн Тăван çĕршывăмăра чи лайăх промышленноçлă, чи лайăх аталаннă ялхуçалăхлă, чи çӳллĕ пусăмра тăракан культурăллă çĕршыв тăвас килет. Эпир Сталинградри ишĕлчĕксем çинче, Смоленскри çунăк кĕлĕ çинче тĕлĕнмелле илемлĕ çĕршыв туса лартăпăр. Ку вăл художниксен, строительсен çĕршывĕ, геройсен çĕршывĕ пулĕ!»

Тĕрĕс те питĕ витĕмлĕ каланă! Ку вăл—халь пурнăç пурăнма тытăнакан миллионшар совет çамрăкĕсен шухăшĕ. Вĕсен ыранхи кунĕ. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн аслă çĕнтерĕвĕсене пула, питĕ шанчăклă! Шăпах çак ыранхи кун ячĕпе пирĕн шкулсен çитĕнекен ăрăва тулли те çирĕп пĕлӳсем памалла, çамрăксенчен пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв умĕнче тăракан çĕнĕ аслă задачăсене татса пама пултаракан çынсем туса ӳстермелле. Аслă шкулсем тĕп дисциплинăсене çирĕп пĕлекен, кĕнекесене хăйсем тĕллĕн вуласа пĕлме пултаракан, шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен таса совет патриочĕсем пырса кĕрессе кĕтеççĕ.

Пирĕн Тăван çĕршыв хăйĕн ывăл-хĕрĕсене хут пĕлекен, культурăллă, нумай вĕреннĕ çынсем пулма хушать. Вăрçă вăрçма пирĕн çĕршывăн нумай вăй хумалла пулнă пулин те, парти, правительство, Сталин юлташ хăй шкул çине, учительсем çине питĕ тимлĕн пăхнă. Вăрçă вăхăтĕнче, вĕренӳпе воспитани пахалăхне ӳстерес тесе, шкулсен ĕçне чылаях улăштарнă. Пирĕн правительство иртнĕ çул йышăннă тăрăх, совет шкулĕн юлашки класĕсенче—тăваттăмĕш, çиччĕмĕш тата вуннăмĕш классĕнче вĕренсе тухмалли экзаменсем ирттерме тытăннă. Вуннăмĕш класра вĕренекенсене, экзаменсем панă хыççăн, вăл çитĕнсе çитнине кăтартса паракан аттестат, уйрăмах чапа тухнисене—ылтăн тата кĕмĕл медальсем параççĕ. Ытти классенче — 5, 6, 8, 9-мĕш классенче ĕлĕкхи пекех аслăрах классене куçмалли тĕрĕслевсем пулаççĕ.

Экзамен вăл—совет шкулĕн пурнăçĕнче питĕ пысăк событи пулса тăрать. Вăл—вĕренекенсен пĕлĕвне государство тĕрĕслени. халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем вăтам шкул ĕçне улăштарма йышăннине мĕнле пурнăça кĕртсе пынине тĕрĕслени пулать.

Халĕ ĕнтĕ экзаменсене ирттерме хатĕрленсе çитнĕ. Вăл вĕреннине тепĕр хут тĕрĕслесе тухнинчен пуçланчĕ. Темиçе уйăх каярахах шкул ачисене РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ туса хатĕрленĕ экзамен билечĕсемпе паллаштарнă. Çакă ĕнтĕ шкул ачисене хăйсенчен мĕн-мĕн ыйтассине тĕрĕсрех пĕлме, хăйсен пĕлĕвне татах та тепĕр хут тĕрĕслесе тухма май пачĕ.

Экзаменсене хатĕрленес тĕлĕшпе вĕренекенсемпе учительсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсен нумай йывăрлăхсене çĕнтермелле пулчĕ. Çав йывăрлăхсенчен чи пысăкки—вăрçă çулĕсенче вĕренекенсенчен нумайĕшĕ кая тăрса юлни пулать. Вĕсен тăрăшса ĕçлесе, малтисене хăваласа çитмелле пулнă.

Шкулта пĕтĕм вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех малтан вĕреннине тăтăшах тĕрĕслесе тата аса илтерсе пынă пулсан, унта экзамен вăхăтĕнче вара нимĕнле кĕтмен япала та пулма пултараймасть.

Экзаменра вĕренекенсенчен тĕплĕн ыйтса пĕлеççĕ. Вуннăмĕш класра вĕренекенсене, вĕсен хăйсене хăйсем тыткалас тĕлĕшпе паллăсем 5-рен каярах пулсан, экзамен пама кĕртмеççĕ те. Çавăн пекех вырăс чĕлхипе сочинени çырнăшăн халь 3-рен каярах паллă илнĕ вĕренекенсене те малашнехи экзаменсене кĕртмеççĕ. Ун пек çамрăксене шкулта вĕренни çинчен свидетельство панипех шкултан кăлараççĕ.

Вуннăмĕш классенче экзаменсем июнĕн 25-мĕшĕнче пĕтеççĕ, 7-мĕш классенче — 27 кун хушши, 4-мĕш классенче—12 кун хушши пулаççĕ. Экзаменсем пулман кунсенче вĕренекенсем, хăйсен пĕлĕвĕн çирĕплĕхне тĕрĕслесе пăхас тесе, хăйсене хăйсем татах та тĕрĕслесе пăхма пултараççĕ.

Экзаменсем йышăнма комиссисем туса хатĕрленĕ. Экзаменсемпе тĕрĕслевсем хăш вăхăтра пулмаллине кăтартакан расписанисене туса кăларса çакнă. Халĕ ĕнтĕ экзаменсене лăпкăн, васкамасăр, тĕплĕн ирттересси юлнă. Экзаменсем йышăнакансене пирĕн çĕршыв вĕренекенсенчен тĕплĕн ыйтса пĕлме, йĕркеллĕ, сисĕмлĕ пулма хушать. Çав вăхăтрах вĕренекенсен хăйсен те лăпкă пулмалла, дисциплинăсене çирĕп пĕлмелле, экзаменсем парас тесе пĕтĕм вăя хумалла. Паллах, кунта çĕр çывăрмасăр вуласа ларасси çинчен мар, ĕçпе канăçа тĕрĕс пĕтĕçтерсе йĕркелесси çинчен, хаклă вăхăтăн кашни сехечĕпе туллин те тухăçлăн усă курасси çинчен сăмах пырать. Ку ĕç ăнăçлă пуласси шкул ачин килти пурнăçĕнчен те нумай килет: çемьере шкул ачине экзаменсене хатĕрленмешкĕн кирлĕ условисем туса памалла, ăна мĕнпе тата мĕнле пулăшмаллине пĕлмелле, лайăх вĕренме кирли çинчен ăнлантарса памалла, шкул ачине хăйĕн вăйне шанса тăма хăнăхтармалла.

Пирĕн шкул ачисем пулас тĕрĕслевĕн результачĕсем пирки ырă кăмăлпа пăлханаççĕ. Анчах та çакăн пек пăлханни экзаменсем вăхăтĕнче хыпаланса ӳкесси пулса тăма кирлĕ мар. Пирĕн шкул ачисем шывра ишекене аса илчĕр, суррине ишсе çитсен: «ишсе каçаймастăп, нимĕн тусан та ишсе каçаймастăп», теме тытăнсан, мĕн пулса тухассине аса илчĕр. Экзамен билетне алла илнĕ хыççăн вĕренекен пăлханнипе нимĕн тума аптрать пулсан, хăйĕн пĕлĕвĕсем тĕлĕшпе иккĕленме тытăнать пулсан, вăл ĕнтĕ шăпах та çав ишевçĕ пек пулса тăрать. Экзамен пама пăлханмасăр, лăпкăн та шанчăклăн кĕрсе каймалла. Педагогсен вĕренекенсене савăнăçлăн саламласа, вĕсем çине сисĕмлĕн пăхса, шкул ачисем хушшинчи пăлханăва, вĕсем хăранине, вăтаннине пĕтерсе пымалла, экзамен паракан шкул ачин пĕлӳ шанчăкне хăпартмалла. Çаксем, паллах, шкул ачинчен вăл мĕн пĕлнине тĕплĕн те таранăн ыйтассине чакарма тивĕçлĕ мар.

Шкулти комсомол организацийĕсем умĕнче питĕ пысăк задача тăрать. Комсомолецсен дисциплинăсене тĕплĕн те таранăн пĕлнин примерне кăтартмалла, юлташсене пулăшу памалла. Комсомол организацийĕсен экзамен паракан кашни вĕренекене хăйĕн вăйне шанса тăма хăнăхтармалла, хăравçăлăха пĕтерме тăрăшмалла. Шкул ачисенчен нумайĕшĕ вăрçă çулĕсенче пысăк йывăрлăхсем тӳссе ирттернине манмалла мар.

Экзаменсем ăнăçлă иртесси халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсенчен, шкул директорĕсенчен, учительсенчен килет. Экзаменсем вăхăтĕнче кашни шкула питĕ тĕплĕн тĕрĕслесси, чи малтанах, кайра пыракан шкулсене пулăшу парасси питĕ паха вырăн йышăнса тăрать. Экзаменсем пынă вăхăтрах йăнăшсене, çитменлĕхсене тӳрлетсе пымалла, экзамен паракансенчен объективлă ыйтмалла тăвас пулать. Çитес вĕренӳ çулĕнче кăçалхи йăнăшсене тăвас мар тесен, экзаменсем мĕнле иртнине питĕ тĕплĕн сăнаса пырса вĕренмелле.

Экзаменсем пуçланчĕç! Шкул ачисемпе педагогсене хăйсен ĕçне ăнăçлăн вĕçлеме сума сунар!

(«Правда» хаçатăн майăн 21-мĕшĕнчи умстатьи).

ХИСЕП ХĂМИ

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕ тăратнă тăрăх, малта пыракан çак МТС-сене Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

2. Çĕрпӳ МТС-ĕ (директорĕ Арзамасов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Григорьев юлташ, старши механик Неночкин юлташ) çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 104,6 процент тултарнă, 4.500 килограмм горючи перекетленĕ.

Çуракинче уйрăмăнах çаксем палăрнă: 7-мĕш бригада (бригадирĕ И. П. Беспалов юлташ) плана 177 процент тултарнă, 950 килограмм горючи перекетленĕ; 10-мĕш бригада (бригадирĕ Т. Степанов юлташ) плана 168 процент тултарнă, 1.100 килограмм горючи перекетленĕ; 4-мĕш бригада (бригадирĕ С. Е. Евдокимов юлташ) плана 132 процент тултарнă, 450 килограмм горючи перекетленĕ; 12-мĕш бригада (бригадирĕ В. Баранов юлташ) плана 132 процент тултарнă, 450 килограмм горючи перекетленĕ; 3-мĕш бригада (бригадирĕ Д. И. Иванов юлташ) плана 117 процент тултарнă, 235 килограмм горючи перекетленĕ.

3. Шăхасан МТС-ĕ (директорĕ Константинов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Мишуткин юлташ, старши механик Северов юлташ) çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 104,3 процент тултарнă, 5.000 килограмм горючи перекетленĕ.

4. Красноармейски МТС-ĕ (директорĕ Константинов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Прокопьев юлташ, старши механик Афанасьев юлташ) çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 100,5 процент тултарнă.

Çуракинче уйрăмах çаксем палăрнă: 6-мĕш бригада (бригадирĕ Егоров юлташ) плана 125 процент тултарнă, 229 килограмм горючи перекетленĕ, çак бригадăри Титов тракторист хăйĕн планне 160 процент тултарнă; 12-мĕш бригада (бригадирĕ П. В. Владимиров юлташ) плана 127 процент тултарнă, 101 килограмм горючи перекетленĕ; 8-мĕш бригада (бригадирĕ Д. Николаева юлташ) плана 113 процент тултарнă, 434 килограмм горючи перекетленĕ.

С. Максимовпа А. Арсентьев трактористсем хăйсен планĕсене чылай ирттерсе тултарнă.

5. Куславкка МТС-ĕ (директорĕ Лаврентьев юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Петряков юлташ, старши механик Митрофанов юлташ) çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 104,2 процент тултарнă, 1.560 килограмм горючи перекетленĕ.

6. Йĕпреç МТС-ĕ (директор ĕçне тăваканĕ Кузьмин юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Кузнецов юлташ, старши механик Михайлов юлташ) çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 102,1 процент тултарнă.

Çуракинче уйрăмах çак бригадăсем палăрнă: Воробьев юлташ ертсе пыракан бригада газогенераторлă тракторсемпе плана 161 процент тултарнă, Яковлев юлташ ертсе пыракан бригада 117 процент тултарнă. Михайловпа Новиков трактористсем газогенераторлă тракторпа 200 гектар, Семеновпа Иванов—160 гектар, Чавкинпа Иванов—164 гектар сухаланă.

Вăрнар районĕ çураки планне тултарнă

ВĂРНАР. (Телефонпа). Районри колхозсем майăн 19-мĕшĕ тĕлне çураки планне пĕтĕмпех тултарчĕç. План тăрăх 11.236 гектар акмалла пулнă пулсан, 11.263 гектар акнă.

В. БАГРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вăрмарпа Канаш МТС-ĕсем хăйсен планĕсене тултарнă

Вăрмар МТС-ĕ майăн 19-мĕшĕ тĕлне çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 104 процент тултарнă, 3000 килограмм горючи перекетленĕ.

Канаш МТС-ĕ майăн 19-мĕшĕ тĕлне çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 101 процент тултарнă, 1.800 килограмм горючи перекетленĕ.

Çĕрулми лартаççĕ

Ишлей районĕнчи уйрăм колхозсем юлашки кунсем хушшинче çуракине ирттерме колхозри пĕтĕм вăйа мобилизацилерĕç тата ушкăнпа ĕçлессине пĕтерсе, уйрăм сдельщинăпа ĕçлеме пуçларĕç. Çакă вара ĕç тухăçлăхне ӳстерме, çураки ĕçĕсене хăвăртлатма май пачĕ.

«Богатырь», «Большевик» тата «Партизан» колхозсем 8 ĕç кунĕнче тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене акса пĕтерчĕç. Çак колхозсенчи И. Волкова, М. Степанова юлташсем ертсе пыракан бригадăсем 7 кун хушшинче пур тĕрлĕ тырăсене те акса мала тухрĕç.

Мишер ял Советĕнчи колхозсем иртнĕ çулсенче кая юлса пыратчĕç, çавна пула кунта кашни çулах тырă начар пулнă. Кăçал колхозниксемпе колхозницăсем çак çитменлĕхе пĕтерессишĕн ырми-канми ĕçлерĕç. Тĕштырăсене ытти колхозсемпе пĕрлех лайăх сухаласа акрĕç. Çак ял Советне кĕрекен «Эстафета» колхозра Ю. Рязанова бригади кашни кунах нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлерĕ. Бригадăри уйрăм колхозниксем: А. Рязанова, В. Федоров, М. Савельев, А. Волков, А. Орлов, Н. Кушников нормăна 120 — 140-шер процент тултарса пынă. Колхоз председателĕ В. Савельев ватă пулсан та колхоз хирĕнче ĕçлекенсенчен уйăрăлман, ĕçре пулăшнă, ĕçĕн пахалăхне тĕрĕсленĕ. Халĕ районри нумай колхозсенче çĕрулми лартаççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Юлса пыракансене пулăшаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, майăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене ăнăçлăн акса пĕтерчĕç. Çуракинче «Красная звезда», «Аниш», «Комбайн», Тельман тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем мала тухрĕç, вĕсем тĕштырăсене 8 кун хушшинче акса пĕтерчĕç. Халĕ çак колхозсем пикенсех çĕрулми лартаççĕ. «Красная звезда» колхоз 21 гектар çĕрулми лартнă. Ферма çумĕнчи участока утăлăх викăпа сĕлĕ, тымар-çимĕçсем акрĕ. Кунта халĕ кантăр акмалли лаптăка 200 лав тислĕк кăларнă, паян-ыран кантăр акма тытăнаççĕ.

Малта пыракан «Ударник» колхоз Кармалти юлса пыракан «Звезда» колхоза хăй лашисемпе тата çыннисемпе 20 гектар сухаласа, 5 гектар акса панă. Çак колхозра фронтовик арăмĕсене пулăшас ĕçе те лайăх йĕркеленĕ, 20 хуçалăхăн кил вырăнĕсене колхоз вăйĕпе сухаласа панă.

Акчурари «Путь Ленина» колхоз та кăçал çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа ирттерчĕ. Ĕç вăйĕсене пĕлсе вырнаçтарни, уйрăм сдельщинăпа ĕçлени ĕç тухăçлăхне нумай хăпартрĕ. Кунта акана тухнăранпа та кулленхи нормăна тултарайман пĕр колхозник те пулман. Уйхир ĕçĕнче ĕçлекенсене пĕрлешӳллĕ столовăйра апатлантарнă. Лашасене хиртех темиçе хут кантарса ĕçленĕ, кантарнă вăхăтра яланах апат панă. Çавăнпа та акара лашасем ывăнни е суранланни пулман.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра агитаторсем колхозниксемпе пĕрлех ĕçленĕ. Çураки вăхăтĕнче 6 номер стена хаçачĕ кăларнă. Стена хаçат редакторĕ Иванова юлташ хаçатсене илемлĕ кăларать, колхоз пурнăçне тĕплĕн çутатса тăрать.

Туçа ял Советне кĕрекен колхозсенче çураки вăхăтĕнче 44 вăкăрпа ĕçленĕ, кулленхи нормăна ирттерсе тултарса пынă.

Н. АНДРЕЕВ.
(Хамăр корр.).

КАНТĂР АКАÇÇĔ

Шăмăршă районĕнчи «Заря» колхоз çуракине 9 кун хушшинче вĕçлерĕ. Колхоз председателĕ Тимофеев юлташ яланах хирте пулса, колхозниксене пулăшса ертсе пычĕ. Звеносемпе бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Çак ăмăртура Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ Цыганов юлташ ертсе пыракан 2-мĕш бригада мала тухрĕ. Унăн бригади пур ĕçе те вăхăтра, лайăх туса пычĕ. Хăйпе ăмăртакан 3-мĕш бригадăна ака ĕçне хăвăртрах вĕçлеме пулăшрĕ. Халĕ колхозра çĕрулми лартаççĕ тата кантăр акаççĕ.

Е. ТИМОФЕЕВА.

Вăрман промышленноçĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

Республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пани

Майăн 19-мĕшĕнче, Советсен çуртĕнче, чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе памалли плана ирттерсе тултарнăшăн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă май, вăрман промышленноçĕнче малта пыракансен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлăва ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ уçать. Президиума çак юлташсене суйлаççĕ: ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Ахазов, Андреев юлташсем, Совнарком председателĕ Матвеев юлташ, Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Бобров юлташ, пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Вишняков юлташ, Совет Союз Геройĕ Орлов юлташ, Алтышево вăрманпромхозĕнчи паллă стахановец Егоров юлташ, вăрман касакан Макарова юлташ тата ыттисем те.

Канашлăвăн Хисеплĕ Президиумне, нумайччен тăвăллăн алă çупса, ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйлаççĕ.

ВЦСПС, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ тата Главснаблес республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне парасси çинчен йышăннă постановление ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Бобров юлташ вуласа парать.

Совет Союз Геройĕ майор Ф. Н. Орлов куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава Чăваш АССР Совнарком Председательне Матвеев юлташа парать.

— Хĕрлĕ Çар,—тет Орлов юлташ, — тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерчĕ. Орденлă Чăваш республикинчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци, ССР Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле, хăйсен ырми-канми ĕçĕпе çак çĕнтерĕве тума пулăшрĕç. Вăрман промышленноçĕнчи рабочисем, колхозниксемпе тата колхозницăсемпе пĕрле, чугун çул валли вутă вăхăтра тата кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе парас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Чăваш республикинчи ĕçсыннисене хаклă награда илнĕ ятпа саламласа, Совет государствин хăватне малашне татах та çирĕплетессишĕн фабрикăсемпе заводсенче, уйхирсенче тата вăрмансенче нихăçанхи пек мар тимлĕн ĕçлеме чĕнетĕп,—тет Орлов юлташ.

Чăваш АССР Совнарком председателĕ Матвеев юлташ хăйĕн ответлă сăмахĕнче малта пыракан вăрман хатĕрлекен предприятисем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлес ĕçре çитĕнӳсем мĕнле туни çинчен каласа пачĕ. Унпа пĕрлех Матвеев юлташ вăрман промышленность ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕ. Вăл вăрманта пĕрмаях ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ начаррине, механизмсемпе çителĕксĕр усă курнине тата ытти çитменлĕхсене те палăртрĕ.

— Пирĕн задача,—тет вăл,—çуллахи вăхăтри вăрман хатĕрлевне кăтартуллă ирттерсе, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăрах хăварасси пулать.

Унтан ВЦСПС-па Главлесоохранăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне икĕ хут илнĕ Çĕмĕрлери вăрман хуçалăх директорĕ Матвеев юлташ, Алтышево вăрманпромхозĕнче вутă турттаракан паллă стахановец Егоров юлташ, Вăрнар районĕнчи Уравăш колхоз председателĕ Васильев юлташ, Чурачăк райсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташ тухса калаçрĕç.

Канашлу Чăваш республикинчи вăрман промышленноçĕнчи мĕнпур работникĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене II-мĕш кварталта чугун çул транспортне—вутăпа шпал материалĕсем, кăмрăк промышленноçне—шахтăсем çирĕплетмелли материалсем хатĕрлесе памалли плана Чăваш халăхĕн уявĕ тĕлне тултарма чĕнсе каларĕ.

Канашлура пулнисем, питех те пысăк çĕкленӳпе, Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

Экзаменсен малтанхи кунĕ

Ĕнер шкулсенче экзаменсем пуçланчĕç. Нумай шкулсем тата вĕренекенсем çак куна лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Экзаменсен малтанхи кунĕ Шупашкарти пур шкулсенче те йĕркеллĕ иртрĕ.

Акă хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕ. 8 сехет иртсенех шкула IV-мĕш, VII-мĕш тата X-мĕш классенче вĕренекенсем пуçтарăна пуçларĕç. Паян вĕсем яланхи пек кĕнекесемпе килмеççĕ, вĕсен аллисенче ручкăпа перосăр пуçне нимĕн те çук. Паллах, вĕсене пулас экзамен хумхантарать, шухăшлаттарать.

9 сехет çитесси 5 минут. Шăнкăрав сасси ачасене классене кĕрсе вырнаçма хушать, вĕсем харпăрхăй класĕсене кĕреççĕ. Халиччен ачасем пĕр парта çине иккĕшĕн ларнăччĕ, паян урăхла. Паян кашни ача пуçне пĕр парта, кашни хăйне уйрăм ларать. Çавăн пек хушать экзаменсем ирттермелли, шкул ачисен пĕлĕвне тĕрĕслемелли инструкци. Партăсем çинче—çырма кирлĕ хатĕрсем, шкул штампне пуснă таса хутсем.

Шăпах 9 сехетре класа экзамен йышăнакан комисси членĕсем—В. Л. Сергеева, А. Николаева, П. Г. Григорьев тата ку класра вырăс чĕлхине вĕрентнĕ Л. Денисова юлташсем кĕреççĕ. Вĕренекенсем вĕсене ура çине тăрса кĕтсе илеççĕ. Комисси председателĕ, вăлах шкулăн директорĕ В. Сергеева юлташ вĕренекенсене экзаменсем пуçланнă ятпа сывлăх сунса саламлать, экзаменсене лайăх тытма ăнăçлăх сунать.

Вырăс чĕлхин преподавателĕ Л. Денисова юлташ паянхи экзаменра вырăс чĕлхипе сочинени çырмалли çинчен пĕлтерет.

Комисси председателĕ В. Сергеева юлташ РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчен янă пакета уçать. Кунта сочинени çырмалли темăсем. Ку темăсене пурне те илтмелле вуласа тата доска çине çырса параççĕ. Сочинени çырма виçĕ тема панă. Кашни вĕренекен хăйне килĕшнĕ темăна суйласа илсе çырма тытăнать...

Шăплăх. Вăл вĕренекенсем сочиненисене кашни хăйне уйрăм, никампа канашламасăр, аякран никам пулăшăвне кĕтмесĕр çырни çинчен калать. Учительница çеç вăхăтран-вăхăта партăсем хушшипе иртсе тухать.

4 сехет те 15 минут ĕçленĕ хыççăн Людмила Петровăпа Римма Федотова хăйсен ĕçĕсене пĕтерсе комисси сĕтелĕ çине пырса хураççĕ. Кăнтăрла иртни 2 сехет тĕлне пур вĕренекенсем те хăйсен ĕçĕсене çырса пĕтерсе параççĕ.

Комисси тĕрĕслес ĕçе тытăнать. Кунта кашни сочинение тĕплĕн вуласа тухаççĕ, кашни ачан ĕçне тивĕçлине хаклаççĕ. Паллăсене комисси членĕсем килĕшнипе лартаççĕ.

X-мĕш класра 24 ача вĕренет. Вĕсене пурне те экзамен тытма ирĕк панă. Экзаменăн малтанхи кунĕн итогĕсем начар мар. Малтанхи результатсем тăрăх, комисси тĕрĕслесе тухнă 6 сочиненирен пурне те «пилĕк» паллăпа хакланă. В. Ухватова, В. Улитина, Р. Терентьева, Т. Данилова, И. Золотова вĕренекенсем малтанхи экзамена лайăх паллăпа тытрĕç. Малтанлăха пăхса тухнă тăрăх, ытти вĕренекенсен те начар мар çырни курăнать. Çакă вăл вĕренекенсем ку дисциплинăна лайăх пĕлнине, учительница Л. Денисова юлташ ачасене тăрăшса вĕрентнине кăтартса парать.

— Пĕр çемьери пек килĕштерсе пурăнтăмăр, тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Ачасем учителĕн йывăр та ответлă ĕçне тивĕçлипе хисеплерĕç. Çакă мана савăнтарать тата лайăххăрах ĕçлеме хаваслăнтарать,—тет Денисова юлташ.

Н. МИНИН.

Хулана илемлетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен коллектив

Чăваш республики 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес тĕлĕшпе Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан завод коллективĕ лайăх ĕçлет. Хулана юсаса йĕркелес тата илемлетес ĕçе çак коллектив пуринчен малтан хутшăнчĕ. Кунти рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем хулана уяв сăн-сăнпачĕ кĕртес тĕлĕшпе кашни 35—40-шер сехет ĕçлеме пулчĕç, хăйсенчен пример илме ытти предприятисенче ĕçлекенсене чĕнсе каларĕç.

Унтанпа пĕр уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ. Халĕ çак ĕçĕн малтанхи итогĕсене тума пулать.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ хулана, завод территорине юсаса йĕркелес тĕлĕшпе тума палăртнă ĕçсене лайăх пурнăça кĕртсе пырать. Ку тариччен завод сывăхĕнчи Карл Маркс, Ленинград тата Кооператив пая урамсене юсаса тухнă. Кунти газонсене пурĕ çур километр тăршшĕ пулнĕ, 113 тĕп йывăç лартнă. Халĕ «Сталинец» стадиона юсаççĕ.

Завод картишне те юсаса тата тасатса çитереççĕ, йывăççем лартса симĕслетеççĕ. 2000 тĕп йывăç кӳрсе килнĕ, вĕсем валли шăтăксем алтса хатĕрленĕ.

Унсăр пуçне столовăйсемпе магазинсене, общежитисемпе хăшпĕр цехсене юсаса йĕркелеççĕ. Паянхи куна чылай общежитисене, магазинсене юсанă, сăрласа илемлетнĕ.

Çак ĕçсене заводри чылай рабочисемпе служащисем тата килхуçи хĕрарăмĕсем те активлăн хутшăнаççĕ.

«БЕРЛИН ÇИНЕ ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ ÇĔКЛЕСЕ ЛАРТНИ» ЯТЛĂ КИНОКАРТИНА

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи кинематографи тĕлĕшĕпе ĕçлекен Комитетра «Берлин çине Çĕнтерӳ ялавĕ çĕклесе лартни» ятлă кинокартинăна кăтартнă. Çак кинокартина Отечественнăй Аслă вăрçăн юлашки тапхăрне, гитлерла Германие тĕппипех арката тăкнине тата Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем парăннине кăтартакан документлă пысăк фильмăн пайĕ пулса тăрать.

Совет кинооператорĕсем Берлин урамĕсенчи çапăçусене ӳкерсе илнĕ. Фильм вăрçăн юлашки кунĕсене сăнласа парать. Экран çинче 1945 çулхи майăн 8-мĕшĕнчи каçа, Карлхорстра Германи пĕр сăмахсăр парăнни çинчен çырнă акт çине алă пуснипе кăтартаççĕ. Экран çинче—Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков тата союзлă командованин представителĕсем курăнаççĕ.

Пĕр сăмахсăр парăнни çинчен çырнă акт çине алă пуснă. Экран çинче историллĕ çак событие сăнласа панă.

Фильма ӳкерессине Сталинла премин лауреачĕ Ю. Райзман режиссер ертсе пынă, фильма Сталинла премин лауреачĕ В. Беляев режиссер монтаж тунă. (ТАСС).

РИГАРИ РАБОЧИСЕН ПАХА ĔÇĔ

Ригăра, «Ригес Аудуми» фабрикинчи рабочисем фабрика çуртĕ айĕнче кирпĕчрен купаласа тунă тоннель тупнă. Çав тоннельре вĕсем 38 электромотор, тĕртмелли автоматла çĕнĕ станоксем, темĕн чухлĕ пурçăн çип, машина пайĕсем, пир-авăр тупнă. Тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, çаксене Латвире хуçаланнă нимĕçсем пытарса хăварнă пулнă.

Тупнă оборудование фабрикăн цехĕсенче вырнаçтарса лартаççĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсем çураки ĕçĕнче

ИШЛЕЙ. Сыпайкасси ял Совечĕ çумĕнче иртнĕ çулта партин территориальнăй пуçламĕш организацине турĕç. Унта 7 коммунист тăрать. Парторганизаци секретарĕ Я. Смирнов юлташ пĕтĕм ĕçе çирĕп план тăрăх туса пырать. Кунта кашни коммуниста уйрăм ĕç панă, колхозăн ответлă участокĕсем çумне çирĕплетнĕ, коммунистсем парти порученийĕсене мĕнле туса пынине тăтăшах тĕрĕслеççĕ. Çавăнпа та коммунистсем хăйсене панă ĕçсене вăхăтра та тĕплĕ тума тăрăшаççĕ. Çак кунсенче коммунистсем çураки ĕçне мĕнле хутшăнса ĕçленине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслӳ коммунистсем хăйсен участокĕсенче лайăх ĕçленине кăтартса пачĕ.

«Ыраш» колхоз çуракинче ытти колхозсенчен мала тухрĕ. Кунта çуракине 9 ĕç кунĕнче пĕтернĕ. Колхоз председателĕ В. Кульков юлташпа А. Бычков бригадир, иккĕшĕ те коммунистсем, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем. Çураки вăхăтĕнче вĕсем яланах хирте, колхозниксемпе пĕрле пулнă. Колхозниксен канăç вăхăтĕнче вĕсем туллин усă курма пĕлнĕ. Çĕнĕ хаçатсем вуласа панă, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсене вăхăтра пĕлтерсе, колхозниксене татах та лайăххăрах ĕçлеме хавхалантарнă. Вулав çурчĕн заведующийĕ И. Федотов тата Л. Кудряшов комсомолец тăрăшнипе колхозра стена хаçачĕ, кашни икĕ кунта пĕр боевой листок кăларса тăнă.

Бычков коммунист ертсе пыракан бригада кашни кунхи ĕç нормине 110—115 процентран кая мар тултарнă. Уйрăм колхозник-сухаçăсем П. Ефимов — 150 процент, Я. Воронцов, А. Печников, В. Кудряшова, В. Вершинин, Е. Петров юлташсем ĕç нормине кашни кун 120—135-шер процент тултарнă. Пахалăх инструкторĕ Сидор Бычков çураки ĕçне çийĕнчех тĕрĕслесе тăнă, кам мĕнле ĕçленине хакласа, ун çинчен колхоз правленине пĕлтернĕ. Кунта пахалăх инспекторĕ йышăнмасăр пĕр ĕçе те пĕтернĕ тесе шутламан. Çав вăхăтрах С. Бычков хăй те ĕçе активлăн хутшăннă, сухаламалли нормăна куллен 115 процент тултарса пынă.

Ĕçе сдельщина йĕркипе туса пыни, кашни сухаçă, сӳреçĕ пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлени çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерме пулăшрĕ.

«Ыраш» колхоз çулран çулах вăйлă тырпул туса илет. Кăçал, Çĕнтерӳ çулĕнче, вĕсем тата ытларах тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Вулав çурчĕн ĕçне юхăнтарса янă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Янайкасси ял Советĕнчи вулав çурчĕ иртнĕ çулсенче начар мар ĕçлетчĕ. Унта кĕнекесемпе хаçат-журналсем çителĕклĕхчĕ. Массăллă ĕçе лайăх йĕркелеме пур майсем те пурччĕ. Анчах кăçал вулав çуртне пачах юхăнтарса ячĕç. Унта ĕçлеме политика енчен лайăх пĕлекен çынна тупса лартман. Библиотекăри кĕнекесем, шашкăпа шахмăтсем, доминосем çухалса пĕтнĕ. Юлашки çулсенче кăларнă литературăран кунта нимĕн те çук. Вулав çуртне килсе тăракан брошюрăсем çине ял Совет секретарĕ тĕрлĕ канашлусен протоколĕсене çырса пынă е колхозсене отношенисем çыра-çыра янă. Килсе тăракан хаçат-журналсене вулама ĕлкĕриччен çурса пĕтереççĕ.

Вулав çурчĕ япăхса кайнишĕн чи малтанах ял Совечĕ айăплă. Унта ĕçлекенсем вулав çурчĕн ĕçне йĕркелеме тăрăшмаççĕ, унти пурлăх саланса çухалса пĕтнине кураççĕ пулин те, нимĕнле мера та йышăнман. «Вулав çурчĕ пулмасан, ял Совечĕ валли техничка тытма хушмаççĕ, вăл пире çавăншăн хаклă», тет ял Совет председателĕ Николаева юлташ.

Кунта вулав çурчĕн ĕçне лайăх йĕркелеме, политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек туса пыма пур условисем те çителĕклĕ. Ялта 4 учитель, коммунистсемпе комсомолецсем пур. Вĕсене ĕçе хастарлăн хутшăнтарни çеç кирлĕ.

М. ДИМИТРИЕВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш республикинчи суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсенчи, обществăллă апатлану системинчи, предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенчи рабочисене, служащисене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 82, 91, 94 тата 95-мĕш номерĕсенче).

54. Евгения Павловна Муцыревăна — Шупашкарти столовăйсен трестĕн 4-мĕш номерлĕ столовăйĕн официанткине.

55. Павел Иванович Мякова—Торгплодоовощĕн Вăрнарти кантурĕн управляющине.

56. Емельян Николаевич Николаева — РСФСР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи УРС начальникне.

57. Мария Ивановна Несовăна—Красноармейски райпотребсоюзăн районри магазинĕн заведующине.

58. Любовь Михайловна Папена—Шупашкарти столовăйсен трестĕн 4-мĕш номерлĕ столовăйĕн официанткине.

59. Анастасия Матвеевна Петровăна—Чăвашпотребсоюз президиумĕн председателĕн заместительне.

60. Илья Михайлович Пивоварова — Чăвашторгăн Çĕмĕрлери отделенийĕн овощехранилищин заведующине.

61. Дмитрий Иванович Петухова—Шупашкарти столовăйсен трестĕн снабжени начальникне.

62. Павел Алексеевич Прахова—Вăрнар райпотребсоюзĕн хатĕрлев кантурĕнче хатĕрлев тĕлĕшпе ĕçлекене.

63. Забирзян Гибатдуллинович Рахматуллина—Чăвашторгăн Куславккари отделенийĕн магазин заведующине.

64. Николай Андреевич Сахарова — РСФСР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи УРС-ĕн главнăй бухгалтерне.

65. Клавдия Евгеньевна Семеновăна—Чăваш Антекоуправленийĕн Шупашкарти сангигиена магазинĕн заведующине.

66. Ольга Алексеевна Серебренниковăна—Чăвашторгăн Улатăрти отделенийĕн 1-мĕш номерлĕ столовăйĕн поварне.

67. Антонина Александровна Серебренниковăна—Вăрмарти ялпо столовăйĕн буфетчицине.

68. Мария Владимировна Синягинăна—Чăвашторгăн Улатăрти отделенийĕн 1-мĕш номерлĕ магазинĕн продавщицине.

69. Антонина Михайловна Сироткинăна—Етĕрне горпоĕн продавщицине.

70. Елена Назаровна Смирновăна — Комсомольски райпотребсоюзăн районри магазинĕн заведующине.

71. Анна Ефимовна Сорокинăна—Чăвашторгăн Шупашкарти отделенийĕн 18-мĕш номерлĕ ларекĕн заведующине.

72. Степан Степанович Степанова — Шупашкар райпотребсоюзĕ çумĕнчи хатĕрлев кантурин чĕртавар склачĕн заведующине.

73. Авксентий Гаврилович Талантова —Елчĕк райпотребсоюзĕн главнăй бухгалтерне.

74. Ольга Прокопьевна Тарасенкăна—Шупашкарти столовăйсен трестĕн 4-мĕш номерлĕ столовăйĕн официанткине.

75. Вячеслав Тихонович Тихонова — Чăвашпотребсоюзăн финанс отделĕн начальникне.

76. Олимпиада Васильевна Токаревăна —Чăвашторгăн Шупашкарти отделенийĕн 6-мĕш номерлĕ магазинĕн секци заведующине.

77. Фаина Александровна Устиновăна —Чăвашторгăн Улатăрти отделенийĕн мастерской заведующине.

78. Иван Игнатьевич Учускина—Улатăр райпотребсоюзĕн Засурско-Бездинински отделенийĕн продавецне.

79. Степан Григорьевич Федие—Шупашкарти завод çумĕнчи ОРС-ăн главнăй бухгалтерне.

80. Зоя Николаевна Федоровăна—Чăвашторгăн Шупашкарти отделенийĕн 4-мĕш номерлĕ магазинĕн секци заведующине.

81. Клавдия Федотовна Федотовăна — Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри ялпо столовăйĕн официанткине.

(Юлашки пулать).

Çĕнтерӳ юрри

Сар хĕвел çине пăхса савăнăр!
Çĕнтерӳ юрри шăранать ян-ян.
Ĕмĕрне сӳнми чап-мухтавăмăр
Çутатса тăрать тĕнчене паян.

Çут тĕнче çине пăхса савăнăр!
Ешĕрсе выртать ирĕкри Çĕршыв
Тăшмана нихçан пурнăç памăпăр,
Тек ан пултăр ун шăрши те марши.

Паттăрсем çине пăхса савăнăр!
Мăн Уяв кунне саламлаç вĕсем.
Чĕрессĕм тулли пирĕн тавăмăр, —
Чыс, салам сире, çĕнтерӳçĕсем!

Сар хĕрсем çине пăхса савăнăр!
Питсенче çиçет кĕтнĕ савăк кун.
Хуйхă иртрĕ халь,—тунсăхламăпăр,
Вĕресе тăрать пирĕн çамрăк юн.

Чернкесем çĕклер Аслă Сталиншăн
Çуллуçне паян мухтаса юрлар.
Вилĕме çĕнме хăват панăшăн
Чĕререн ăна тавтуса пурнар.

Тавтапуç сана, ыр Çĕршывăмăр!
Эс нихçан пулман çичĕ ют кулли.
Сан çинчен эпир юрă хыврăмăр,
Ĕмĕрне сӳнми çĕнтерӳ юрри.

Илья ТУКТАШ.

Александер фельдмаршал союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавралăхĕнчи çарĕсене чĕнсе калани

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири штабĕ çумĕнчи Рейтер агентстви корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: майăн 19-мĕшĕнче Александер фельдмаршал союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавралăхĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсене чĕнсе каланă. Çав чĕнсе каланинче вăл—Тито маршал хăйĕн шухăшĕсене вăйпа пурнăçа кĕртме шутлать пулмалла, тенĕ.

«Эпир ку вăрçăра çавăн пек хăтланнине пурнăçлама парас мар тесе çапăçрăмăр,—тенĕ вăл.—Пирĕн политика çакăн пек: чикĕсене улăштарас ыйтăва тĕплĕн тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн, ун пирки пĕр-пĕрипе канашласа пăхнă хыççăн тата тивĕçлĕ правительствăсем ăна сӳтсе-явнă хыççăн тин вĕсене улăштарма юрать. Анчах та Тито маршал хăй илес тенĕ çĕрсене вăйпа тата оккупацилесе туртса илме шутлать курăнать. Çавăн пек хăтланни Гитлер, Муссолини тата Япония хăтланни пекех пулнă пулĕччĕ. Ку вăрçăра эпир çавăн пек хăтланнине кансĕрлес тесе çапăçнă. Эпир пĕрле ĕçлеме тата территори ыйтăвĕсене тĕрĕс татса памашкăн законлă йĕркепе ĕçлеме килĕшрĕмĕр. Ку вăл тĕп принципсенчен пĕри пулса тăрать; пĕрлешнĕ халăхсем, тĕрĕс те çирĕп мир тăвас тесе, çав принципсемшĕн питĕ пысăк жертвăсем тӳсрĕç. Çакă вăл пирĕн представительсем халь Сан-Францискăра пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăх системине тăвас тесе ĕçлекен никĕс пулса тăрать. Эпир халь тĕп принципсене пăрахма пултараймастпăр. Вĕсемшĕн эпир пурте çапăçнă. Çав принципсем тăрăх, пирĕн çав çĕрсене вĕсем пирки мирлĕ конференцире калаçса татăличченех опека йĕркипе пăхса тăмалла. Çав çĕрсенче пирĕн тивĕçлĕхпе задача—хамăрăн çар вăйĕсемпе усă курса, закон тата тивĕçлĕ йĕрке тытса тăрасси, халăхшăн мирлĕ те канлĕ пурнăç туса хурасси пулать. Эпир çав çĕрсене илме хапсăнмастпăр, çавăнпа пире ĕненме юрать. Эпĕ Тито маршалпа туслăн калаçса килĕшес тесе питĕ тăрăшрăм, анчах та манăн ĕç тухмарĕ. Çавăнпа США-па Англи правительствисем çав ыйтăва хăйсем Тито маршал умне лартрĕç. Совет правительствине ун çинчен каласа панă. Эпир халь Тито маршалăн сăмахне илтесшĕн: вăл хăй илме хапсăнакан территори ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама килĕшет-и, е вăл çав çĕрсене вăйпа илесшĕн пулĕ-и».

ТИТО МАРШАЛ КАЛАНИ

БЕЛГРАД, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио çапла пĕлтерет: Танюг агентствин корреспонденчĕ Тито маршалтан —Александер фельдмаршал çарĕсене чĕнсе калани çинчен мĕн шухăшлатăр? тесе ыйтсан, Тито маршал çапла каланă:

«Югослави чăсĕсем Истрире тата Словени Приморьинче тăнине Гитлерăн, Муссолинин тата Японин ют çĕрсене тытса илес меслечĕсемпе танлаштарнă пирки хам тарăхни тата тĕлĕнни çинчен каласа намасăр чăтса тăма пултараймастăп. Тăшмана çеç çавăн пек айăплама пулать, асапланса çитнĕ, юн нумай юхтарнă союзника ун пек айăплама юрамасть; ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çĕршывсем: çак ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçăра Югослави паттăрлăхпа хăйне хăй шеллемесĕр кĕрешнине тĕслĕхе кăтартрĕ, тесе шутлатчĕç. Югослави çарĕ оккупантсене Соча шывĕ таран тата унтан малалла хăйĕн вăйĕпех хăваласа пычĕ, вăл халь çав территорире тăнине ют çĕрсене тытса илмешкĕн тăнă пек хаклама юрамасть. Çавăн пек айăпланине эпĕ пĕтĕм вăйпа сирсе яратăп.

Тепĕр хут калатăп: Югослави çарĕ тата югославсем пурте союзниксен вăйĕсемпе, союзлă çĕршывсемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлеме хатĕр, анчах çав вăхăтрах Югослави хăйне картмасăр тăма та, хăйĕн прависенчен мăшкăллама та пама пултараймасть. Эпĕ калатăп: Югослави пĕрле ĕçлеме тата калаçса татăлма хатĕр, анчах та вăл калаçса татăлакан никĕс—союзник пулса тăракан Югославие кӳрентермелле ан пултăр».

АНГЛИПЕ АМЕРИКА НОТИ ÇИНЕ ЮГОСЛАВИ ПАНĂ ОТВЕТ

БЕЛГРАД, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 15-мĕшĕнче Англипе Америка правительствисем Триест районĕнчи лару-тăру пирки Югослави правительствине нота янă. Белградри радио ĕнер пĕлтернĕ тăрăх, информаци министерстви ют çĕршывсен хаçачĕсемпе Югослави хаçачĕсен представителĕсене çапла пĕлтернĕ:

«Демократиллĕ федерациллĕ Югослави правительстви Истрие, Триеста тата Словени Приморьине Югослави çарĕн чăсĕсем оккупациленĕ пирки Великобританипе США правительствисем янă нота çине ответ панă. Ответа союзниксем пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлемелле пултăр тесе тăрăшса çырнă. Унтан çапла каланă: Югослави çарĕ, союзлă çарсенчен пĕри пулса тăрса, пĕрлехи тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешсе ирĕке кăларнă территорире союзниксен çарĕсем юлнă пекех юлма пултарать. Югослави çарĕ, тăшман çарĕсен чылай пысăк пайне татса илес тесе тата чуралантарнă тăвансене ирĕке кăларас тесе хаяррăн çапăçса, пысăк сухатусем тӳсрĕ, вăл халиччен пулман паттăрлăхăн тĕслĕхĕсене нумай кăтартрĕ. Çав облаçсенчи халăх тăшмана хирĕç икĕ çул хушши кĕрешрĕ. Унăн пысăк пайĕ—югославсем. Çав халăх, итальянецсемпе нимĕçсен фашизмне хирĕç кĕрешсе, питĕ пысăк жертвăсем тӳсрĕ. Çавăнпа та пирĕн организацин чăсĕсене, ирĕклĕх комитечĕсене тата гражданла управление çавăнта тăма кансĕрлемелле мар.

Пирĕн союзниксем ыйтнипе, демаркаци линине палăртса хурас ыйтăва лартнăччĕ. Ăна Белградра Александер фельдмаршалпа Тито маршал пĕрле калаçнă чухне лартнăччĕ. Югослави çарĕ Триестра, Истрире тата Словени Приморьинче тăтăр тесе пирĕн пĕтĕм халăх, пĕтĕм çĕршыв ыйтать. Анчах та çакă вăл çав облаçсем мĕнле çĕршыв аллине куçасси пирки мирлĕ конференцин татăклă постановленине палăртни пулмасть, мĕншĕн тесен демократиллĕ федерациллĕ Югослави пĕр енлĕ аннексие хирĕç тăрать».

ТРИЕСТРИ ИТАЛЬЯНЕЦ-ДЕМОКРАТСЕН МАНИФЕСЧĔ

БЕЛГРАД, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, Словени Приморьинче (итальянецсем унта халăхăн сахалтарах пайĕ пулса тăраççĕ) «Авенире» ятлă хаçатра Триестри итальянецсем-демократсем çакăн пек манифест пичетлесе кăларнă:

«Фашистсенчен асап курнă çĕршывра, хамăрăн асапланса вилнĕ çынсен юнĕпе тасалнă çĕршывра ирĕклĕх пурнăçа кĕрет, итальянецсемпе словенсен çĕнĕ тăванлăхĕ çуралса çирĕпленет. Пĕр ушкăн çыннăн интересĕсемшĕн тăрăшса, фашистла пропаганда çав икĕ халăха пĕр-пĕрне курайми тума хăтланнă. Анчах та çав тери хаяр кĕрешӳ тата хамăр халăха ирĕке кăларасшăн çапăçса вилнĕ çынсен юнĕ реакциллĕ çынсене хăйсен шухăшне пурнăçа кĕртме памарĕ. Халĕ ирĕке тухнă Триестра итальянецсемпе словенсем историре пĕрремĕш хут пĕрле ĕçлеççĕ, вĕсем пурте чечекленсе ӳсмелли тĕслĕх кăтартасшăн.

Сывă пултăр Тито маршал! Сывă пултăр итальянецсемпе словенсен тăванлăхĕ! Сывă пултăр автономиллĕ Триест тата демократиллĕ федерациллĕ Югослави!»

ЮГОСЛАВИ ÇАРĔН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

БЕЛГРАД, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави çарĕн генеральнăй штабĕ майăн 16-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: фронтăн пур участокĕсенче те тăшман организованнă хирĕç тăрасси пĕтрĕ. Югослави чăсĕсем тăшмана хĕçпăшалсăрлантараççĕ тата тăшманăн сапаланса пĕтнĕ юлашки пĕчĕк ушкăнĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ВАШИНГТОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 19-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 300 бомбардировщикĕ, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Хонсю утравĕ çинчи Хамамацу ятлă промышленноçлă паха хулана тапăннă.

ВАШИНГТОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтерет: майăн 19-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Токио хулин хĕвеланăç тавралăхĕнчи районĕнче вырнаçса ларнă промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă. Филиппин утравĕсен шутне кĕрекен Лусон утравĕ çинче Америка çарĕсем японецсен çарĕсен хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкма тытăннă. Минданао утравĕ çинче Америка çарĕсем Япони çарĕсен тĕп пайне вăл йышăнса тăракан позицисенчен хĕссе кăларнă, вара японецсен ирĕксĕрех тусем çинелле чакма лекнĕ.

Вăтам бомбардировщиксемпе истребительсем Японин Формоза утравĕ çинчи аэродромĕсемпе промышленность сооруженийĕсене тапăннă. Вăйлă пушарсем тухнă. Пушарсенче взрывсем пулнă.

ВАШИНГТОН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх. Окинава утравĕн Наха ятлă тĕп хули районĕнче американецсен тинĕс пехотин 6-мĕш дивизийĕн чăсĕсем японецсен тĕреклетнĕ паха пункчĕсене йышăннă. Япони çарĕсене пысăк сухатусем кӳнĕ. Авианосецсем çинче вырнаçса тăракан авиаци, йышлăн вĕçсе кайса, Рюкю утравĕсен çурçĕр пайне тапăннă. Американецсен «Либерейтор» йышши бомбардировщикĕсем Хонсю утравĕн кăнтăр хĕррин чи тĕрлĕ сооруженисене тапăннă.

Каммингс поляксен Лондонри реакциллĕ ушкăнĕн Совет Союзне хирĕçле позицийĕ çинчен

ЛОНДОН майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатра Каммингсăн статьине пичетлесе кăларнă. Çав статьяра вăл, поляксен Лондонри реакционерĕсен ĕçĕсем çинчен каланă май, çапла çырать: «Поляксен Лондонри правительстви пирĕн психологине нимĕн те пĕлмест вара. хăйсен пурнăçа кĕме пултарайман ĕмĕчĕсене темиçе консерватор—парламент членĕсем пулăшасси çине шанса (вĕсем обществăла шухăшра çав тери пĕчĕк вырăн йышăнса тăраççĕ), çитес çывăх вăхăтсенчех Англипе Россия хушшинче хĕçпăшаллă хирĕçӳ пуçланса каясса кĕтсе тăраççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ çакăн пек хирĕçӳ пуçланса каяссишĕн турра кĕлтăваççĕ тата ăна кĕтсе илмешкĕн ĕнтĕ чăннипех те хатĕрленме тытăннă».

Каммингс шухăшĕ тăрăх, поляксен Лондонри правительствинчи улшăнусене, ăна Российăна хирĕç кĕрешмелли çирĕп команда туса хурас тесе, сӳтсе-яваççĕ. Президент Рачкевич ултавçă Сосновский генерала хăвăртрах Лондона таврăнма чĕнсе янă, леш ĕнтĕ Лондона килмешкĕн Канадăран тухнă та. Сосновский çĕнĕ премьер-министр пулать пулмалла. Бур-Комаровский—главнокомандующи, Андерс—национальнăй оборона министрĕ пулать. «Кун пек пулсан,—тесе çырать автор,— Арцишевскин национальнăй советăн председателĕ пулнипе килĕшме тивет. Национальнăй совета, килĕшӳ тăвассишĕн тăрăшакан çынсене унтан пурне те тасатса кăларнă хыççăн, çĕнĕрен тăваççĕ пулмалла, çакă вара национальнăй совета Российăна хирĕç кĕрешмелли «нациллĕ пĕрлĕхĕн» организацийĕ туса хума май парать. «Дзенник польски—Дзенник Жолнежа» хаçат хăйĕн маскине сирсе пăрахнă та халĕ ĕнтĕ Совет Союзне хирĕçле уççăнах çыракан хут татки пулса тăнă. Вăл пирĕн вырăс союзниксене пулма пултаракан пур преступленисемшĕн те айăплать, вăл хăй тĕрĕс информацисене Польшăран илсе тăратпăр, тесе çырать. Поляксен Англири çарĕ ӳссе пыни те пире тĕлĕнтерет. Европăра вăрçă пĕтнĕ пулин те, поляксен çарĕ ӳснĕçемĕн ӳссех пырать. Вăйпа мобилизациленĕ пирки Германи çарĕ ретĕнче çапăçнă пур поляксене те халĕ поляксен çарне куçараççĕ. 1944 çул пĕтнĕ тĕле ку çарта 150 пин çынран сахалтарах пулнă. Халĕ, поляксен официальнăй çыннисем пĕлтернĕ тăрăх, вăл çарта сахалтан та 300 пин çын шутланать. Мĕншĕн? Паллах, поляксен Англири командирĕсем, çак çара Польшăна таврăнма шутламаççĕ. Анчах та çак пысăк çара хĕçпăшаллантарасси тата ăна тытса усрасси ĕлĕкхи пекех налог тулекен акăлчан çыннине тивет, вун-пĕр пуçне çак парăмсем хăçан та пулин каялла килсе кĕрессин шанчăкĕсем нимĕн чухлĕ те çук. Польшăн информаци министерстви те пирĕн укçа-тенкĕпе активлăн пропаганда тăвать. Çав министерство штатне салатса ярас пирки нимĕнле сас-хура та çук-ха. Пачах урăхла, ют çĕршывсенче çĕнĕ ĕç вырăнĕсем туса хураççĕ, пропаганда тĕлĕшпе ĕçлекен официальнăй çынсене Европăри ирĕке кăларнă çĕршывсен столицисене яраççĕ. Британи парламенчĕ фанатиксен—Лондонри поляксен хăрушă ушкăнне, ертсе пыракан орган вырăнĕнче нимĕне те тăмаскере, пулăшу памашкăн хăçан çав тери пысăк укçа-тенкĕ тăкаклама чарăнĕ-ши?

Ман татах çакна калас килет: 1—2 миллион поляк çынни—арçынсем, хĕрарăмсем, ача-пăчасем, халĕ союзниксем оккупациленĕ Германин хĕвеланăçĕнчи районĕсенче пурăнаканскерсем, хăйсен тăван хулисемпе ялĕсене таврăнассине кĕтсе пурăнаççĕ. Поляксен Лондонри «правительстви» çав çынсене инструкци пуличчен вырăнтан тапранма хушман. Польша ыйтăвне татса париччен вĕсене Германи çĕрĕ çине вырнаçтарса тухаççĕ пулмалла. Ирĕксĕрлесе куçарнă поляксен хăшпĕр пайне, совет правительстви пулăшса тăракан Польшăн Варшавăри правительствинчен поляксене хӳтĕлес тесе кăна, поляксен Лондонри правительстви ыйтнă тăрăх, Британи утравĕсем çинче юлма ирĕк параççĕ пулсан, ку вара пысăк йăнăш туни пулать. Лондонри поляксем халĕ вут-кăварпа выляççĕ».

МУСКАВПА ВАРШАВА ХУШШИНЧЕ ПОЕЗДСЕМ ÇӲРЕМЕ ПУÇЛАНĂ

ВАРШАВА, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 18-мĕшĕнче Польша республикин столицине Варшава хулине чи малтанхи хут Мускавран тухнă пассажирски поезд çитнĕ. Хĕвелтухăç вокзалĕнче çав поезда питĕ чаплăн хирĕç тухса йышăнса илнĕ. Çапла ĕнтĕ, вăрçă хыççăн Совет Союзĕн столицинчен Польша республикин столицине тата каялла поездсем çӳреме пуçланă.

ДАНИ МИНИСТРĔСЕМ БОРНХОЛЬМ УТРАВĔ ÇИНЕ ПЫНĂ

КОПЕНГАГЕН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Борнхольм утравĕ çине Дани министрĕсем: Кристмас Меллер, Кнуд Кристенсен, Аксель Ларсен тата Хедтофт Хансен çитнĕ. Аэродром çинче министрсене Стрелков полковник тата вăл ертсе пыракан совет офицерĕсем кĕтсе илнĕ. Аэродром çинчех Кристмас Меллер çапла сăмах каланă:

«Полковник господин, мухтавлă вырăс çарĕн офицерĕсем! Эпир, тăватă министр, вырăс çарĕсене çак утрав çине килсе ăна ирĕке кăларнăшăн Дани правительстви ячĕпе тав тăватпăр. Пирĕн çĕршыв пирĕншĕн пилĕк çул хушши хупă пулчĕ. Анчах та халăхсене ирĕке кăларассишĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç Россия мĕнле кĕрешнине пирĕн пĕтĕм халăх сăнаса пынине эсир шанса тăма пултаратăр. 1941 çулта Мускавшăн пулса иртнĕ çапăçусем, 1942-мĕшпе 1943-мĕш çулсенче Ленинградпа Сталинградшăн пулса иртнĕ çапăçусем Дани халăхĕшĕн те питĕ пысăк ĕçсем пулса тăраççĕ. Эпĕ сире ĕнентерсех çапла калама пултаратăп: эсир пирĕн столицăна пырас пулсан, вара пирĕн халăх вырăс халăхĕпе Россия çине, Данин яланхи тусĕ çине мĕнле пăхнине хăвăрах курса ĕненĕр.

Эпир Российăн аслă Маршалне Сталина тата вырăссен Хĕрлĕ Çарне тав туса саламлатпăр, Российăпа Дани хушшинчи çыхăнусем яланах лайăх пулнă, вĕсем ĕмĕрлĕхех çавăн пек пулĕç, тесе шанатпăр эпир».

ФРАНЦИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

ЛОНДОН, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, промышленноçлă Рона департаментĕнче майăн 16-мĕшĕнче пĕтĕмĕшле забастовка пуçланса кайнă. Организациленĕ мĕнпур ĕççыннисем, вăл шутра учительсем те, çав забастовкăна хутшăннă. Забастовкăна ертсе пыракан комитетпа калаçса татăлнă тăрăх, муниципалитет учрежденийĕсем ĕçлеме пăрахман. Лион хулинче кафе, кино, пысăк магазинсем пурте хупăннă, çавăн пекех тата пĕчĕк суту-илӳ фирмисем те нумайĕшĕ хупăннă, трамвайсем çӳреме пăрахнă. Департаментри ирĕклĕх комитечĕ забастовкăна ертсе пыракан комитета чĕнсе каланă. Çав чĕнӳре департаментри комитет забастовка тăвакансене «пĕтĕм çĕршыв кĕрешекен» социальнăй реформăсен программине пурнăçа кĕртессишĕн тăма чĕнет.

ПАРИЖ, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Францире горняксен забастовки пуçланса кайнă. Горняксем снабжени ĕçне лайăхлатма ыйтаççĕ. çавăн пекех тата ертсе пыракан кадрсене тасатма хушаççĕ. Çав кадрсем Франци гитлеровецсем йышăнса тăнă вăхăтра тăшман майлă ĕçленĕ, вĕсем тăшман валли çĕркăмрăк ытларах кăларттарма тăрăшнă.

Ĕçсен пĕтĕмĕшле конфедерацийĕн бюровĕ пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре вăл хăй пĕтĕмĕшпех горняксемпе пĕр шухăшлă пулнине каланă.

ЭДУАРД ЭРРИО ФРАНЦИЕ ТАВРĂННИ

ПАРИЖ, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви çапла пĕлтерет: майăн 19-мĕшĕнче Эдуард Эррио хăйĕн арăмĕпе пĕрле Францие çитнĕ.

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: Эдуард Эррриона каллех Лион хулин мэрĕ пулма суйланă.

АФИ АГЕНТСТВИ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Ватиканран çакăн пек пĕлтерет: «Политика тĕлĕшпе ĕçлекен хăшпĕр ушкăнсем çакăн пек хыпар сараççĕ: вăрçă преступникĕсем, уйрăм кăтартса парсан, нацистсем Рима оккупацилесе тăнă вăхăтра çав хулара 320 заложника вĕлернĕ пирки айăпланакан фашистсем, Ватиканра пытанса пурăнаççĕ. Авторитетлă вырăнтан пĕлтернĕ тăрăх, концентрациллĕ лагерьтен тарнă 6 нимĕç те Ватиканра пытанса пурăнаççĕ».

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

„Çыхăну ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем"

Кăçал апрелĕн 17-мĕшĕнче пирĕн хаçатра çакăн пек ятлă материал пичетленсе тухрĕ. Вăл материалта Красноармейски районри çыхăну конторипе почта агенчĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсем çинчен çырнăччĕ.

Республикăри çыхăну управленийĕнчен çырса пĕлтернĕ тăрăх, материалта çырнă фактсем тĕрĕс пулнă.

Мăн Шетмĕре письмоносец пулса ĕçленĕ Петровăна, фронтовик çемьисем патне куçарса панă укçасене хăйне валли илнĕшĕн, суда панă, укçине каялла шыраса илнĕ.

Чатукассинчи почта уйрăмĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ Кураковăна почта укçине 25.000 тенкĕ хăйне валли илнĕшĕн 5 çуллăха хупса усрамалла суд тунă.

Пичет союзĕн Красноармейски районри организаторне растрата тунăшăн ĕçрен кăларнă. Çыхăну конторинче çителĕклĕ таран пукансем туянас тĕлĕшпе мерăсем йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ. редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательстве конторин — 0—23.

НТ 00597 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16000